# СЫВĂ-И, ТУССЕМ!



**Эпĕ Маша Майорова, Шупашкар районĕнчи Анат-Кĕнерти вăтам шкулта 5-мĕш класра вĕренетĕп. Сирĕн хаçат пирĕн пата та çитрĕ. Тулли кăмăлпа вуласа тухрăм юлашки номере, хам та çырса пăхма шутларăм.**

Кĕçех Çĕнĕ çул уявĕ çитет. Вăл аслисемшĕн те, ача-пăчашăн та чи кĕтнĕ уяв. Çĕнĕ Çула çемьепе кĕтсе илме сĕнеççĕ. Эпĕ сире хамăр çемье йăли-йĕркипе паллаштарасшăн.

Пирĕн çемье пысăк. Атте килте кĕçĕнни, çавăнпа эпир асаттепе тата асаннепе пĕрле пурăнатпăр. Аттен пиччĕшĕ-аппăшĕсем пирĕнтен инçе пурăнаççĕ. Çĕнĕ Çул уявне кашни çул черетпе пĕр - пĕрин патĕнче ирттеретпĕр. Кăçал уяв пирĕн патра пулать. Эпир уява хĕрсех хатĕрленетпĕр ĕнтĕ. Кашни çемьен хăйĕн таппипе, юррипе савăнтармалла, çемье хаçачĕ кăлармалла. Çĕнтерӳçĕсене «Чи ăста ташăçă», «Чи ăста юрăç», «Чи ăста сăвăç», «Чи илемлĕ костюм» тата ытти медальсем кĕтĕç. 5 çемье хушшинчи вăйă-ăмăртăва хаклаканнисем — асаттепе асанне пулĕç.

Унтан хаваслă лотерея кĕтет пире. Мĕн кăна тухмасть пулĕ асамлă михĕрен; тӳме, шăпăр, кашăк, памперс, шоколад, мунчалапа супăнь, пукане, шăхлич, кушак çури, чĕрĕ автан... Кама мĕн лекет! Чи хаклă парне — Çĕнĕ Çул символĕ, калăпăр, сысна тетте. Хăш çемьене вăл лекет, çав çемье Çĕнĕ Çулта телейлĕ пулать тесе шутлатпăр эпир.

Вун икĕ сехет çитнĕ май пурте иртекен çулхи çитĕнӳсемшĕн савăнаççĕ, пăтăрмахсене аса илсе кулаççĕ. Сехет 12 çапнине асаттепе асанне, икĕ ывăлĕпе виçĕ хĕрĕ, икĕ кинĕпе виçĕ кĕрӳшĕ тата 11 мăнукĕ кĕтсе илеççĕ.

Сĕтел варринче Çĕнĕ çул хурĕ саркаланса ларать. Ун ăшĕнчен е пан улми, е çĕр улми, е хуратул пăтти тухать. Ăна ман анне питĕ тутлă пĕçерет.

**Сĕтел варринче Çĕнĕ çул хурĕ саркаланса ларать. Ун ăшĕнчен е пан улми, е çĕр улми, е хуратул пăтти тухать. Ăна ман анне питĕ тутлă пĕçерет.**

Çапла вăйă - кулăпа, юрă — ташăпа савăнăçлăн кĕтсе илетпĕр эпир Çĕнĕ çула. Сире те çавнах сунатăп !

**Маша МАЙОРОВА,**
**5 класс Çӳлтикасси ялĕ**

---

Тимлекенсен канашĕн членне, «Муркаш ен шăпчăкĕ» конкурса йĕркелекенне, «Хыçалти парта» хаçатăн туснe, усламçăна тата çамрăксен пуласлăхĕ çинчен шухăшлакан Валерий Семенович Рубцова тата тимлекенсен канашĕн ертӳçине, «Моргаушская» чăхчĕп фабрикин тĕп директорне Николай Григорьевич Ванеркина Çĕнĕ çул ячĕпе Калайкасси шкул администрацийĕ, шкул хаçат редакцийĕ тата учительсемпе вĕренекенсем чун-чĕререн саламлаççĕ, çирĕп сывлăх, иксĕлми, ĕçре çитĕнӳсем сунаççĕ.

**Калайкасси шкул**
**ачисемпе администрацийĕ,**
**«Хыçалти парта» редакцийĕ**

---

Очăкасси шкул директорне Матвеева Фаина Аркадьевнăна Çĕнĕ çул ячĕпе саламлатпăр. Сире çитес çулта ĕмĕтленнине пурнăçлама, кĕтнине кĕтсе илме, йывăрлăхсене пăхмасăр малалла ăнтăлма вăйхал, иксĕлми телей, çирĕп сывлăх тата ăнăçу сунатпăр.

***Очăкасси***
***шкул коллективĕ***

---



Калайкасси шкул директорне, ăста та пултаруллă ертӳçĕне, хисеплĕ вĕрентекене тата ырă кăмăллă та тарават çынна — Ирина Венекдиктовна Осиповăна çитсе пыракан 2007 çул ячĕпе саламлатпăр. Çитес çул Сирĕншĕн уйрăмах ăнăçлă пултăр, чи çутă ĕмĕтсем пурнăçланччăр, ĕçре те йăлтах кал-кал пытăр. Çирĕп сывлăх, иксĕлми телей тата вĕри юрату сире, Ирина Венекдиктовна, Çĕнĕ çулта.

***Шкул коллективĕнчен***

---



Эпĕ Çĕнĕ çул ячĕпе Калайкасси шкулĕнчи 10 П класа чун -чĕререн саламлатăп. Пурне те сывлăх, ăнăçу, телей, вăрăм кун-çул сунатăп. Çĕнĕ çулпа сире!

**Любовь ВИШНЕВА,**
**Калайкасси шкулĕ**

---

*Çĕр чăмăрĕ çинче пурăнакан çынсене Çĕнĕ çулпа, Хĕрлĕ Сысна çулĕпе саламлатăп.*

*Уйрăмах Калайкасси шкулĕнче вĕренекен тус-юлташсен çитес çул телей, ăнăçу тата вĕренӳре «5» паллăсем сунатăп.*

*Вĕрентекенсемпе вĕренекенсем пĕр-пĕрне ăнланса пыччăр, вĕсем хушшинче хура кушак чупса ан каçтăр.*

**Рита ЗАЙЦЕВА,**
**8Б класс**



---

Эпĕ хама саламлатăп!
Телей, нумай укçа сунатăп
Çирĕп сывлăх, ыр ача!
Мана ан манăр нихăçан
Çитес çул пулăп пуян!



**Настя Воробьева, 8Б кл.**
**Калайкасси шкулĕ**

---



Юратнă учительсене Çĕнĕ çул ячĕпе хĕрӳллĕн саламлатăп, ăнăçусем, телей сунатăп. Нихăçан та ан чирлĕр, яланах çакăн пек çамрăк, илемлĕ тата ырă кăмăллă пулăр. Сирĕн ĕмĕтсем пурнăçланччăр, шкул ачисем лайăх вĕреннипе савăнтарччăр. Çывхарса килекен сысна çулĕ лайăх, ăнăçлă ирттĕр!

**Салампа Лариса ОСИПОВА,**
**Калайкасси шкулĕ, 11 П класс**